www.tavanen.ru

# Тăван Ен

плюс Причебоксарье

№36 (10589-10590) • СЕНТЯБРĔН 15-МĔШĔ • 2017 • ЭРНЕКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать



Спорт Туапсене çитерні

Вăл Пушкинпа та тавлашнă... ПАЛЛĂ КУН → 5

Ал ĕç ту та – телефонлă пул! КОНКУРС → 7

Наци кросĕ йыхравлать АНОНС → 12

• КАЛЕНДАРЬТИ КУН



В. Егорова

# «Вăрман – манăн иккĕмĕш кил»

Вырсарникун, сентябрĕн 17-мĕшĕнче, Раççей вăрман ĕçченĕн кунне паллă тăвать

**Вăрман хуçалăхне упрас, çĕнетсе тăрас ĕçре Карачура лесничествин вăрман маçтăрĕ Вера Егорова хĕрĕх çул ытла тăрăшать. Çĕрпӳ районĕнчи Елаш ялĕнче пурăнаканскер Çатра Маркаран, Кивçурт Маркаран пуçланса Çĕнĕ Шупашкар хыçĕнче вĕçленекен 2 пин ытла гектара пăхса тăрать.**

## Вутă çуккипе

«Килте кăмака хутма вутă çуккипе ирĕксĕрех вăрмана кайрăм», – тет вăл пурнăçне вăрманпа мĕнле çыхăнтарнипе кăсăклансан. Вутăлăх çулталăк ĕçлес тенĕ те – паянхи кун та унта. Малтанласа Иккассинчи лесничествăра сувенирсем, савăт-сапа тунă çĕрте вăй хунă çамрăк хĕрарăм. Йывăçран ăсталанă илемсем пурте Вера Петровна алли витĕр тухнă. Лесничий сĕннипе Сĕнтĕрвăрри техникумне вĕренме кĕнĕ вăл. Анчах шăп çак вăхăт тĕлне мăшăрĕ çĕре кĕнипе пĕчĕк икĕ ачипе тăрса юлнăскерĕн вĕренме май килмен. «Кăнтăрла цехра ĕçлеттĕм, каçпа – фермăра осеменаторта. Ачасене çывăрттарса ярсан чăлт! вăранса каяттăм та заданисене пурнăçлаттăм. Ирпе экзамена каяттăм», – тет хĕрарăм тепĕр çулталăкран техникума куçăмсăр майпа вĕренме кĕрсен пуçланнă сессисене аса илсе. Çапла çулталăкран ăна лесничествăра мастера лартнă.

«Тин вĕренме пуçласан, тĕрĕссипе каласан, юманпа çăкана та лайăххăн уйăрма пĕлмен пуль», – тет Вера Петровна паян. «Мĕншĕн вăрманта ĕçлеме пуçларăн? Хăрамастăн-и?» – ыйтнă лесничий пĕрремĕш кун вăрмана ĕçлеме тухнă çамрăк хĕрарăмран. Хăрани пур пулсан та çук пурнăç ирĕксĕрех ĕçлеме хистенине илтсен «Ан хăра. Хăв тĕкĕнмен çĕлен-калта сана тĕкĕнмĕ» тенĕ лесничий ăна. Çак сăмахсене Вера Егорова пурнăç тăршшĕпех асра тытать.

## Çĕленпе пĕр чĕлхе тупнине...

Вăрман ĕçченĕн аса илмелли пайтах. Виçĕ çула яхăн вăрманта яланах пĕр лакăмрах пуçне кăларса ларнă çĕлен патне çывăха та пыман вăл. «Тухрăн-и-ха? Ну, салам...» – тесе иртсе кайнă кăна. Вăрманта пĕччен çӳренĕ чухне ӳсен-тăранпа, чĕр чунпа калаçни те пулать иккен. Пĕр çулхине хĕлле çил-тăмана лекни те манăçмасть. Верăна мастер çуна йĕрĕнчен пăрăнмасăр вутă йышăннă çĕре çитме хушнă. Çула тухнă кăна – асар-писер çил-тăман пуçланнă. Çуна йĕрĕ юр айĕнче çухалнă, Вера юр ашса йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ, шикленнипе макăрнă та пулĕ. Палăртнă вырăна çитме вара – виçĕ çухрăм. Газопровод патĕнче юртан тасатнă çул çине тухнишĕн савăнма ĕлкĕрнĕ кăна, кĕтменлĕх тăп чарăнса тăма хистенĕ ăна: ума тем пысăкăш хир сысни тухса тăнă.

→ 9

## • ÇĔРШЫВРА

**ВĂРМАН ТАТА СУНАРÇĂСЕН ХУÇАЛĂХĔСЕНЧЕ ТĂРĂШАКАНСЕНЕ ÇĔР ЛАПТĂКĔПЕ ТИВĔÇТЕРМЕ ПУÇЛАСШĂН.** Çак ыйтăва Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвĕнче тишкернĕ. Чăваш Республикин çут çанталăк пурлăхĕпе экологи министерствин информацийĕпе, вăрман хуçалăхĕсенче çамрăк специалистсем сахал ĕçлеççĕ. Ведомство çакăн пек йышăну квалификациллĕ кадрсене упраса хăварма витĕм кӳрессе шанать. Унăн проектне Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ырланă, специалистсен сĕнĕвĕсене шута илмелли пирки асăрхаттарнă.

## • РЕСПУБЛИКĂРА

**ХАЛĂХА ĔÇПЕ ТИВĔÇТЕРЕС ТĔЛĔШĔНЧИ ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔН ПАХАЛĂХНЕ** Раççей Ĕç министерстви кашни çур çулта хак парать. 2011 çултан пуçласа Чăваш Ен мониторинг пĕтĕмлетĕвĕсемпе яланах малта. Ку хутĕнче те ăна çулталăкран ытларах ĕç вырăнĕ шыракансен йышĕ пĕчĕк субъектсен хушшинче палăртнă. Федерацин Халăха ĕçпе тивĕçтерес приоритетлă программине пурнăça кĕртме пирĕн республикăна «пилотлă» регионсен йышне кĕртнине те палăртма кăмăллă. Çавна май ку ĕçе йĕркелесе пыма Чăваш Ен хушма укçа тенкĕ кĕтет.

**СĂМАХ МАЙ**

**Чăваш Республикин «Халăха ĕçпе тивĕçтересси» патшалăх программине пурнăça кĕртме 2017 çулăн пĕрремĕш çур çулĕнче 181,2 млн тенкĕ (105,6 млн тенкĕ – федераци бюджечĕн укçи-тенки, 75,6 млн тенкĕ – республикăн, уйăрнă. Программа 46 пин çынна пулăшу кӳнĕ.**

2018/ I çур çуллăх çырăнтару хакĕсем

Çырăнтару индексĕ 54820

| | |
|---|---|
| ПОЧТА УЙРĂМĔСЕНЧЕ (Республикăри пур районта та çырăнтараççĕ) | 377 тенкĕ 82 пус |
| АЛЬТЕРНАТИВА ÇЫРĂНТАРĂВĔ (Редакцире илсе тăмалла); ЭЛЕКТРОНЛĂ ÇЫРĂНТАРУ | 260 тенкĕ |
| ИШЛЕЙ РАЙПОВĔН ЛАВККИСЕНЧЕ (Шупашкар районĕнче вырнаçнă Ишлей райповĕн лавккисенче çырăнса илсе тăмалла); «ЧĂВАШПИЧЕТ» КИОСКĔСЕНЧЕ | 300 тенкĕ |

«Тăван Енсĕр» тăвансăр пекех



Мария ЕГОРОВА, Кӳкеç



**Александр ИВАНОВ,**
Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ:

– Массăллă информаци хатĕрĕсем влаçпа халăха çыхăнтаракан тĕп шăнăр пулса тăраççĕ. Çынсен ыйтăвĕсене йышăнассине хастартарах йĕркелемелле. Кашни лару-тăрăва тĕплĕ тишкермелле, тавлашăвăн кашни енне итлемелле. Уçсăнлăх тата профессионаллăх кăна вулакан шанăçне кĕме пулăшаççĕ.

**ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНĔСЕНЕ АТАЛАНТАРАССИПЕ ĔÇЛЕКЕН КАНАШ ЛАРĂВĔН ПĔТĔМЛЕТĔВĔСЕМ** Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвĕнче çӳтсе явнă тĕп тема пулса тăнă. Унта регионри влаç органĕсен умне федераци шайĕнче лартнă тĕллевсене пурнăçланине те çӳтсе явнă. 2018-2022-мĕш çулсенче федераци хыснинчен РФ регионĕсене патшалăх программисене пурнăçа кĕртме субсиди мелĕпе уйăрмалли укçа виçине 2017 çултинчен кая мар пăхса хăварĕç. Раççей Президенчĕ Владимир Путин кăçалхи август уйăхĕн 5-мĕшĕнче канашăн Кировра иртнĕ ларăвĕнче çакăн пирки шантарнă. Çак ыйту патне таврăнса тунтикун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев приоритетлă проектсене пурнăçлама республика хыснинче 2018-2020 çулсем валли укçа-тенкĕ уйăрса хăвармаллине палăртнă. Кăçал кăна вĕсене пурнăçа кĕртме 95 млн тенкĕ уйăрнă. ■

**СЕНТЯБРĔН 8-9-МĔШĔСЕНЧЕ 2002-2003 ÇУЛТА ÇУРАЛНĂ АРÇЫН АЧАСЕН ТАТА ХĔРАЧАСЕН** хушшинче ирĕклĕ кĕрешӳпЧăваш Республика первенствипе ăмăртусем иртнĕ. 44 кг таякансен хушшинче е олимп резервĕн училищинче вĕренекен Мария Каракчиева 1-мĕш вырăн йышăннă. Çак вĕрентӳ заведенийĕнчех ăс пухакан Егор Егоров 42 кг таякан арçын ачасен хушшинче ăмăртса пьедесталăн 1-мĕш картлашки çине тăма тивĕç пулнă. Ишлейри Диана Иванова вара 48 кг таякан хĕрачасен хушшинче 3-мĕш вырăн йышăннă. Апашри Даниил Павлов 63 кг таяканнисен хушшинче ăмăртса «кĕмĕлле» пулнă. Хăйсен виçисенче Тутаркассинчи Денис Николаев 1-мĕш, Валентин Сиротин – 2-мĕш, Артем Сиротин – 3-мĕш вырăнсене тивĕçнĕ. ■

**УЯВ САЛАМĔ**



**Михаил ИГНАТЬЕВ,**
Чăваш Республикин Пуçлăхĕ

**Вăрман отраслĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕпе саламлатăп!

Вăрмансем – пирĕн планетăн шанчăклă хӳтлĕхĕ, вĕсем экологи ырлăхĕшĕн тата халăх сывлăхĕшĕн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Ен Правительстви тата вăрман отраслĕн специалисчĕсем вăрмансене – тивĕçлипе сыхласа упрас тĕлĕшпе ырми-канми тăрăшаççĕ.

Республикăра вăрман фондне сыхламалли, хӳтĕлемелли тата çĕнетсе пымалли тухăçлă хурал тытăмне туса хунă. Вăрман пушарĕсене асăрхаттармалли тата вĕсене вăхăтра тупса палăртмалли мерăсен комплексĕ пурнăçланать, вут хыпса илнĕ вырăна маларах тупса палăртмалли, ун çинчен пĕлтермелли тата ăна пĕтермелли тытăм та лайăх аталанать.

Симĕс пуянлăха çĕнĕрен лартса ӳстересси, вăрман хуçалăхĕнче наукăпа тĕпчев ĕçĕсем туса ирттересси кирлĕ шайра пулса пырать. Çут çанталăк территорийĕсене упраса хăварас тĕлĕшпе чăнахах та нумай тунă. Çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ тата явапллă ĕç, ăна Чăваш Енĕн вăрман отраслĕн ĕçченĕсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

Регионта пурăнакан çынсем йывăç-тĕм лартас тата вăрмансене çӳп-çапран, хăрăк йывăçсенчен тасатас тĕллевпе йĕркелесе ирттерекен акцисене сахал мар хастар хутшăнаççĕ.

Чăваш Енĕн вăрман пуянлăхне типтерлĕн сыхласа упракан, экологи хăрушсăрлăхне ӳстерес ĕçе курăмлă тӳпе хывакан кашни çыннах чунтан тав тăватăп.

Сире пур кăмăлтан çирĕп сывлăх, ырлăхпа телей, пултарулла мĕнпур пуçарурах çитĕнӳсем сунатăп!

**● СУЙЛАВ - 2017**

## Депутатсен йышĕ хушăнчĕ

Тунтикун райадминистрацинче иртнĕ планеркăра Шупашкар район территори суйлав комиссийĕн председателĕн Зоя Маслова Пĕрлехи сасăлав кунĕн малтанхи пĕтĕмлетĕвĕсемпе паллаштарнă. Централлă 9-мĕш суйлав округĕнче Петр Анатольевич Горбуновшăн (Раççей пенсионерĕсен партийĕнчен) 62 çын, Юрий Геннадьевич Леонтьевшăн («Справедливая Россия» партирен) – 29 çын, Юрий Владимирович Михайловшăн («Единая Россия» партирен) – 378 çын, Наталья Григорьевна Павловашăн (хăйĕн кандидатне хăех тăратнă) – 16 çын, Николай Витальевич Сорокиншăн (Коммунистсен партийĕнчен ) – 377 çын сасăланă.

Чурачăкри 3-мĕш суйлав округĕнче район депутачĕсен Депутатсен пухăвĕн депутачĕ пуласшăн 4 çын кĕрешнĕ. Пуринчен нумай сасă – 761 – пухса Сергей Валентинович Романов («Единая Россия» партирен) мала тухнă. Алексей Витальевич Беловшăн (Коммунистсен партийĕ) 141 суйлавçă хăйсен сассине панă, Андрей Александрович Федотовшăн (ЛДПР-Либерал-демократи партийĕ) – 11-ĕн, Луиза Васильевна Шогулинăшăн («Справедливая Россия» парти) – 171-ĕн сасăланă.

Суйлав кăтартăвĕсемпе, Шупашкар районĕн Депутатсен пухăвĕн депутатсен йышне Юрий Михайлов тата Сергей Романов кĕнĕ. ■

# Тыр-пул пӳлмене кĕрет

### Хуçалăхсем çĕр улми пуçтарма пулăшакансене кĕтеççĕ

• ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

**Ял хуçалăх ĕçченĕсем тар кăларса вăй хураççĕ – тыр-пул пухса кĕртессипе пĕрлех выльăх апачĕ хатĕрлессишĕн, кĕрхисене акса хăварассишĕн тимлеççĕ. Кĕркунне чăх-чĕпе шутлама кăна мар, акса-лартса илнĕ тыр-пулпа пахча çимĕçе пухса кĕртме те вăхăт.**

### Пур ĕçе те – вăхăтра

Вырма ĕçĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та тĕрĕслесех тăрать. Ял хуçалăхĕнчи лару-тăрăва Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов тунтикун ирхине райадминистраци пуçлăхĕсемпе ирттернĕ канашлура та тишкернĕ. Сентябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне республикăри хуçалăхсенче тыраллă тата пăрçаллă культурăсене 204,5 пин га çулнă, ку вăл палăртнинчен – 75,5%. 555 пин т тырă тĕшĕлесе кĕртнĕ. Гектартан тухакан вăтам тухăç 27,2 ц танлашать. Çак кунсенче уй-хире пурĕ 246 комбайн тухнă.

Хальлĕхе 1265 га çинче «иккĕмĕш çăкăра» 27 пин т пухса кĕртнĕ. Вăтам тухăçлăх – 213,7 ц. Ытти пахча çимĕçе 461 га çинче пуçтарнă, пĕтĕмĕшле 5,9 пин т. 34,5 га хăмла татнă.

Кĕрхисене вăхăтра акса хăварни пĕлтерĕшлĕ. Палăртнă тăрăх, кăçал республикăра 105 пин га кĕрхи культурăсем йышăнмалла. Хальлĕхе çуррине яхăн акнă. Сергей Артамонов çанталăка пула кĕрхисене акас ĕç начартарах пынине, палăртнă плансене пурнăçламаллине калană.

### Республикăринчен кая мар

Райони лару-тăру еплерех-ха? Сентябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне райони ял хуçалăх предприятийĕсемпе фермер хуçалăхĕсем 9842 га çинче 27026 т тырă вырса кĕнĕ, ку вăл палăртнинчен – 71,1%. Çĕр ĕçченĕсен тăрăшулăхĕ кăтартусене республикăрисемпе çывăхлатма май панă. Гектартан илекен вăтам тухăç – 27,5 ц. Чи пысăк тухăçпа савăнтаракан культура – тритикале, «Агрофирма «Ольдеевская» ЗАО-ра ăна пĕр гектартан 43,7 ц таранах пухса кĕртнĕ. Асăннă хуçалăхри ытти тĕш тырă та начар мар, вăтам тухăçлăх кунта – 37,7 ц. Вырма ĕçĕсене вĕçленисен йышĕнче – «Агрофирма «Средняя Волга» ОАО (220 га), «Агрофирма «Ольдеевская» ЗАО (491 га), «Агрофирма «Туруновская» ООО (22 га), «Агарикус» ООО (768 га), Агард ООО (420 га). Тыраллă тата пăрçаллă культурăсен чи пысăк лаптăкĕсем «Приволжское» АО-н (пĕтĕмĕшле 1731 га) – 1014 га çинче вырнă, «Чурачикское» ОАО (1608 га) – 1184 га, «Атлашевский» СХК ЗАО (1556 га) – 1176 га, Ленин ячĕллĕ СХПК-колхоз (1513 га) – 911 га. Çак кунсенче уй-хирте 36 комбайн ĕçленĕ.

Вăй хурсан – кĕркунне мул пухан









ШУТА ИЛМЕ
**Раççей ял хуçалăх министерствин кăтартăвĕсемпе, çĕршывра 107,7 млн т тыр-пул пухса кĕртнĕ.**

Редакци архивĕнчи сăн ӳкерчĕксем

### Выраççĕ, акаççĕ, çум курăка хирĕç кĕрешеççĕ

«Прогресс» ЗАО ертӳçи Василий Яковлев пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер çумăр йĕпетсе каяс умĕн уй-хире 5 комбайн тухнă. Ирхи 9 сехетре вырма пуçланăскерсем 20 т тĕш тырă çапса ĕлкĕрнĕ, çанталăк пăсăлнăран хăйсен ĕçне чарса лартма тивнĕ. «Уй-хиртен тырă 28% нӳрĕклĕхпе кĕчĕ. Тĕш тырра тасатассипе Янăш тата Мамăш токĕсем çинче 2 бригада вăй хурать. Пысăк хăватлă сушилкăпа типĕтетпĕр, нӳрĕк виçи 14% таран çитсен кăна тырра упрама складсене хуратпăр. Çак вăхăтрах кĕрхисене акма тухрăмăр. Уй-хирте 6 тата 9 метр сарлакăшлă тырă акмалли агрегатсем ĕçлеççĕ. Тыр-пул пухса илнĕ çĕр лаптăкĕсенчи çум курăка пĕтерес тĕллевпе гербицит сапатпăр», – хуçалăхри ĕçсемпе паллаштарчĕ ертӳçĕ.

Районта кĕрхисене акассине палăртнă плана тултарма тĕллевленĕ. Паянхи куна кĕрхи культурăсене акма 4450 га хатĕрленĕ, 2595 га çине валлăх вăрăнтарнă. 2155 га кĕрхи тулă, 400 га ыраш йышăннă.

### Çĕр улми ани кĕтет

Паян тыр-пул çитĕнтерекенсемшĕн кăна мар, пахча çимĕç ӳстерекенсемшĕн те хĕрӳ вăхăт. «Иккĕмĕш çăкăр» ӳстерекен райони пысăк хуçалăхсем – «Элис» тата З.П. Плотникова фермер хуçалăхĕсем. Çумăрлă çанталăк пахча çимĕç пуçтаракансен умне те чăрмав кăларса тăратать. Паянхи куна 100 га çĕр улми лаптăкĕнчен 25-шне кăна пухса кĕртме ĕлкĕрнĕ. Хуçалăхсем пулăшу кӳрес текенсене хапăл тусах йышăнаççĕ.

■ **АННА ФИЛИППОВА**

**ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ**

Шупашкар районĕнче сентябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне

**3981**

**çын**

грипран вакцинаци тунă, çав шутра 482 ача тата 3499 çитĕннĕ çын.

**2017 ÇУЛХИ АВГУСТ УЙĂХĔНЧЕ РЕСПУБЛИКĂРА** 38 çынăнне (пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 17) ВИЧ-инфекци тупса палăртнă. Вĕсенчен 68,5% – арçынсем. Регистрацилеме пуçланăранпа регионта пурĕ 2497 ВИЧ-инфекциллĕ çын пулни паллă. Август уйăхĕнче Шупашкар районĕнче пурăнакан пĕр хĕрарăмăнне ВИЧ–инфекци тупнă. ■

**ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ КĂÇАЛХИ 8 УЙĂХРА** 8147 тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕре хута янă, çав шутра – 6403 тăваткал метр – уйрăм çынсен çурт-йĕрĕ. ■

**РОСТЕНДЕР САЙТРА ЛАПСАР ЯЛ ТĂРĂХĔНЧИ** Карачура ялĕнче ФАПа хăпартма тендер вырнаçтарни çинчен пĕлтернĕ. Контрактăн пуçламăш хакĕ 7 116 843 тенкĕпе танлашать. Заявкăсене сентябрĕн 28-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Çĕнĕ зданире пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕ, икĕ медсестра тата стоматолог ĕçлемелле. ФАП сывлăха çирĕплетме 1300 çынна йышăнма хатĕр пулĕ. ■

**ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ** 6770 тонна утă хатĕрленĕ, сенаж – 30980 тонна. ■



**● РЕСПУБЛИКĂРА**

**«ЧУВАШУПРДОР» КУ, МУНИЦИПАЛИТЕТСЕН АДМИНИСТРАЦИЙĔСЕН КĂТАРТĂВĔСЕМПЕ,** сентябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне республикăра 174 км ытларах автомобиль çулĕсене (федераци сечĕсене шута илмесĕр) юсанă. Регион сетĕнче 20 км яхăн тăршшĕ 6 çул çинче юсав ĕçĕсене вĕçленĕ, вырăнти сетьсенче – 97 км яхăн тăршшĕ 121 çул çинче. Паянхи куна 25 км яхăн автомобиль çулĕсене сарнă.

Аса илтерер, кăçал республикăна çулсем сарма тата юсама нихăçанхинчен те нумайрах укçа-тенкĕ – 5 млрд тенкĕ ытла – уйăрнă. Транспорт министерстви ĕçсене çирĕп контрольлесе тăрать. ■

**● 2017 - РАÇÇЕЙРЕ ЭКОЛОГИ ÇУЛТАЛĂКĔ**

**ПĔТĔМ ÇĔРШЫВРИ «СИМĔС РАÇÇЕЙ» ЭКОЛОГИ СУББОТНИКĔН ШАЙĔНЧЕ ÇАК ЭРНЕРЕ** Атайкасси ял тăрăхĕнчи клубсен тата



библиотека ĕçченĕсем чарăну павильонĕсем тата Атайкассинчи суту-илӳ центрĕ çумĕнчи территорие çӳп-çапран тасатнă. Кану кунĕсем хыççăн кунта кĕленче, тĕрлĕ хут йăванса выртнине вĕсем лăпкăн сăнайман. ■

**ЧĂРĂШКАССИНЧИ ПУЛТАРУЛĂХ ÇУРТĔНЧЕ СЕНТЯБРĔН 9-МĔШĔНЧЕ** «Çӳп-çапран мода» конкурс иртнĕ. Сакăр хĕрача хăйĕн дизайнер ăсталăхне кăтартнă. Экологи темине тĕпе хурса чиперккесем пластикрен, пленкăран тата ытти çӳп-çапран кĕпесем çĕленĕ. Жюри членĕсем кашни хĕрачан тумĕ хăйнеевĕрлĕ хӳхĕм тата куçа илĕртнине кура чи лайăххине палăртайман. Конкурса хутшăнакансем пурте дипломсене тивĕçнĕ, тортпа сăйланнă. ■

**РАЙОНТИ ТĔП БИБЛИОТЕКА ИРТТЕРНĔ «ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧИ ЭКО-ТĔЛĔНТЕРМĔШ» КОНКУРСĂН ПĔТĔМЛЕТĔВĔСЕМ ПАЛЛĂ.** Унта хутшăнакансен хăйсем пурăнакан ял-сала, вăрман, юханшыв, тăван тавралăх илемне сăн ӳкерчĕк, ӳкерчĕк, литература хайлавĕ, хăйсем аллипе ăсталанă япаласем урлă кăтартмалла пулнă. «Сăн ӳкерчĕксем» номинацире ĕç уйрăмах нумай тăратнă. Иккасси шкулĕнче вĕренекенсем, Чăрăшкасси, Çырмапуç, Кăшавăш, Ишек ял тăрăхĕсенче пурăнакансем конкурса хастар хутшăннă. Жюри членĕсем конкурс çĕнтерӳçисене палăртнă. Кӳкеçре пурăнакан О.П. Владимирова хĕллехи икĕ хĕвеле ӳкерсе илме пултарнă, Шорчекассинчи А. Сидорова Йăршу шывĕ çинчи чул тĕлĕнтермĕше, ăна çынсем «крокодил» теççĕ, сăн ӳкернĕ, Ишекри Е.И. Григорьева, Анаткас Тăрăн ялĕнчи К.И. Викторова тăван енри илеме кăтартнă. ■

# Çанталăк сивĕтет – халăх ăшă кĕтет...

## Анчах коммуналлă пулăшушăн пурте тӳлеççĕ-и?

**• ÇИВĔЧ ЫЙТУ**

**Çанталăк кĕр енне кусçрĕ. Сивĕтсе пынăçемĕн хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрленес ыйту çивĕчленет.**

Тунтикун ăна Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе иртнĕ планеркăра та сӳтсе явнă. Республикăри лару-тăрупа строительство, архитектура тата коммуналлă хуçалăх министрĕ Владимир Михайлов паллаштарнă. Вăл паянхи кун вырăнти хăйтытăмлăх органĕсем 2017-2018 çулсенчи кĕркуннехихĕллехи тапхăрта коммуналлă хуçалăхсем çирĕппĕн ĕçлесе пыччăр тесе норматривлă актсем йышăннине, çурт-йĕр, коммуналлă хуçалăх тата социаллă сфера объекчĕсем хутмаллиăшăтмалли тапхăра хатĕрленнине хаклакан комиссисем йĕркеленине палăртнă. Министр хăйĕн докладĕнче муниципалитетсенчи лару-тăрăва та тимлĕх уйăрнă – эрне пуçламăшĕнче тăватă район кăна хутса ăшăтмалли тапхăра пĕтĕмĕшле хатĕр пулнă, тепĕр 11-шĕнче ĕçсене вĕçлесе пыни паллă.

Кӳкеç поселок администрацийĕ, управляющи компанисем хĕле кĕтсе илме хатĕр-и – çак ыйтăва ытларикун райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев ертсе пыракан канашлура сӳтсе яврĕç. Райадминистрацин коммуналлă хуçалăх пайĕн ертӳçи Геннадий Ефимов вырăнти лару-тăрупа паллаштарнă май поселокри «Первомайская» урамри 20-мĕш çурт пирки асăнса хăварчĕ. Унта управляющи компани çук, пӳлĕмсен харпăрçисем ТСЖ йĕркелесси çинчен те шухăшламаççĕ. Çакна Кӳкеç ял тăрăх пуçлăхĕ Владимир Вершинин та çирĕплетет. «Çуртра пурăнакансенчен чылайăшĕ коммуналлă пулăшушăн та тӳлесшĕн мар, çав вăхăтрах авари сиксе тухас пулсан ял тăрăх администрацинчен пулăшу ыйтаççĕ. Пĕлтĕр вырăнти администраци бюджечĕн укçи-тенкипе çурт тăррине çĕнетрĕмĕр», – пĕлтерчĕ пуçлăх. «Жилкомцентр» ООО управляющи компани ертӳçи Лия Александрова пӳлĕмсенче пулса курнине, хăшĕ-пĕри закона пăхăнмасăр душ кабинисем вырнаçтарнине палăртрĕ. «13 тăваткал метрлă пӳлĕмре те душ кĕмелли кабина вырнаçтарма пултарнă вĕт, çав вăхăтрах вентиляци пăрăхĕсем çук», – тет вăл пăшăрханса. Харпăрçăсем хăйсем ирĕкĕпе, тивĕçлĕ органсене пĕлтермесĕр пӳлĕмĕсенче улшăнусем кĕртсе ыттисен сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратни пирки шухăшлаççĕ-ши? Шупашкарти Петров урамĕнчи 9-мĕш çуртра пурăнакансен хăйсен килĕсене пăрахса хăварсах тарма лекнине те ас тăвать-тĕр вулакан.

Владимир Димитриев асăннă çуртпа çыхăннă ыйтусене, ТСЖ йĕркелес, председатель суйлассине çитес вăхăтрах татса пама хушрĕ.




Редакци архивĕнчи сăн ӳкерчĕк

**Ăшăшăн пурин те вăхăтра тӳлемелле**

**ШУТА ИЛМЕ**

**Район çыннисен управляющи компанисен умĕнчи парăм 21,5 млн тенкĕпе танлашать.**

Ял тăрăх пуçлăхĕ пӳлĕмсен хуçисене пухса ыйтусене сӳтсе явма шантарчĕ.

Канашлура «Теплоэнергосети» ООО ертӳçи Николай Елагин çынсен коммуналлă пулăшушăн тӳлемелли парăмĕсем çинчен сăмах хускатрĕ, полици сотрудникĕсене тата МИХ ĕçченĕсене явăçтарса рейдсем йĕркелеме сĕнчĕ.

Хаçат пичете каяс умĕн Геннадий Ефимовпа тепĕр хут çыхăнтăмăр. Вăл Кӳкеç поселокĕнчи пурăнмалли çуртсемпе социаллă сфера объекчĕсем хутса ăшăтмалли тапхăра тĕппипех хатĕррине пĕлтерчĕ. Çанталăк 5 кун 8 градус ăшă е унран та аяларах тăрас пулсан çурта – хваттер хуçисен парăмсем çук пулсан – ăшă иртерех те пама пултараççĕ. Чи малтан ача сачĕсене, шкулсене тата сиплев учрежденийĕсене çитермелле ăна. Поселокри çуртсене вара, яланхи пекех, ăшăпа октябрь пуçламăшĕнчен тивĕçтерме тытăнма тĕллев лартнă – çапла пĕлтерчĕ райадминистрацин коммуналлă хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ.

■ **ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ**

**● ХЫПАР-ХĂНАР**

**ПАЛЛАКАНСЕН 6-МĔШ КЛАСА КАЯКАН ХĔРĔ ÇУЛЛАХИ КАНИКУЛ ВĂХĂТĔНЧЕ ХУЛА ТУЛАШĔНЧИ «САЛЮТ» ЛАГЕРЬТЕ КАННИ ПИРКИ ХĂПАРТЛАНСАХ КАЛАСА ПАНИ ХĂЛХАНА КĔЧĔ.** «Çав тери килĕшрĕ, юлташсем нумай тупрăм. Кашни кунах мĕн те пулин çĕнни, тĕрлĕ конкурс, вăйă-кулă, каçхине – дискотека! Çĕнĕ юлташсемпе çыхăну татмастпăр, социаллă сетьсенче хутшăнатпăр. Килес çул та каяс кăмăл пур», – хавхалансах чĕвĕлтетрĕ вăл. Ачасемпе çамрăксем çуллахи каникулта вăхăта усăллă ирттерччĕр тесе район бюджетĕнчен те сахал мар укçа-тенкĕ уйăрнă. Шăпах çакăн пирки райадминистрацин вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Борис Романов тунтикун иртнĕ планеркăра каласа пачĕ.



2016 çулта ачасемпе çамрăксен сывлăхне çирĕплетме тата канăвне йĕркелеме район бюджетĕнчен 5 620 пин тенкĕ уйăрнă пулсан, кăçал çак кăтарту тата пысăкрах. 2017 çулта шкул çумĕнчи тата хула тулашĕнчи кану лагерĕсенче 2245 ача сывлăха çирĕплетнĕ тата каннă, çакăн валли 7800 пин тенкĕ тăкакланă. Хула тулашĕнчи лагерьсенче канма районта пурăнакан ачасене 363 путевка тивĕçнĕ. Халăха социаллă пулăшу паракан центр урлă шкул çумĕнчи лагерьсенче канма 70 путевка тата хула тулашĕнчи лагерьсенче сывлăха çирĕплетме 111 путевка уйăрнă. Борис Романов пĕлтернĕ тăрăх, кăçал пĕлтĕрхипе танлаштарсан ачасен çуллахи канăвне йĕркелеме укçа-тенкĕ нумайрах уйăрнипе лагерьсенче канакансен йышĕ те ӳснĕ. ■

www.tavanen.ru Сентябрь 15 - 21, 2017 Тăван Ен № 36 (10589-10590)

# Пурнăç çулĕпе çума-çумăн



• АСЛĂ ĂРУ

**Кашни çемьен хăйĕн шăпи. Пурнăç йĕркелесе ĕмĕр ирттересси уй урлă каçасси мар. Сăмахăм Вăрманкас Тăрăн ялĕнчи 50 çул ытла пĕрле пурăнакан Ефимовсем çинчен.**

Çемье пусĕ Геннадий Ефимович Тăрăн шкулне вĕренсе пĕтерсен Ишеке çул тытать, вăтам пĕлӳ илет. Спортпа туслă, хут купăса алăран ямасăр юрă-кĕвĕ калакан каччă клубра пĕр çулталăк ĕçлет. Салтака кайма ят тухать, Геннадий инçетри Чита хулинче виçĕ çул связист пулать. Хĕлĕн-çĕвĕн ĕçре пиçĕхни салтакра та пулăшу кӳнĕ, ахальтен мар ултă метр çурă çӳллĕш юпа тăррине тăхăр çеккунтра хăпарнă вăл.

1960 çулта тăван яла таврăнсан колхозра вăй хума тытăнать, ферма заведующийĕнче тимлет, клуб ертӳçин тилхепине те алла тытать çамрăк. Хастарлăхне кура ăна Шупашкара ял хуçалăх енĕпе çулталăклăха вĕренме яраççĕ. Мал ĕмĕтлĕскер тĕп хуларан таврăнсан Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче ăс пухать. Геннадий Ефимович агроном, бухгалтер-плановик, диспетчер пулса вăй хурать, бригадирта та тимлет. Пĕр ĕçрен те аякра пăрăнманскер бригадăри ĕçченсемпе (ытларах хĕрарăмсемпе) çирĕм çула яхăн, мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен тăрăшать. «Наряд хупма пĕлетчĕ, михĕ çыхса салтнине те шута хуратчĕ. Тырăпулă пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра ĕçе вĕçлес тĕллевпе тĕттĕмлениччченех уй-хирте тăрăшнă, рабочисене тепĕр кунне канма ирĕк паратчĕ. Шӳтлеме те пултарать, çирĕп те ыйтать», – аса илеççĕ унпа пĕрле ĕçленĕ çынсем.

Хастар яш çемье çавăрма Анаткас хĕрне Зиновия Петровнăна суйласа илнĕ. Мăшăрĕ ĕмĕр тăршшĕпех сывлăх хуралĕнче чирлисене сипленĕ, хăйĕн тивĕçĕсене пурнăçлама санитаркăран пуçланă. Тирпейлĕхне тата ĕçченлĕхне, кăмăл-сипетне кура çамрăк хĕре малалла вĕренме сĕнеççĕ. Хĕр килĕшет, çапла тĕп хулара икĕ çул пĕлӳ пухать. Çав вăхăтра ача-пăча больницинче ĕçлет. Маттурскерне вĕренсе пĕтеричченех медсестрана куçараççĕ. Тăван тăрăха акушерка, заведующи пулса ĕçлеме куçараççĕ. Кирек епле лару-тăрура та чирлĕ çынна вăхăтра пулăшу парасси уншăн тĕп вырăнта пулнă. Зиновия патне пулăшу ыйтма сĕм-çĕрле те, тул çутăличчен те пынă. Ефимовсем нихăçан та алăка питĕрсе тăратман.

Çемьене пĕрин хыççăн тепри çĕн кайăксем вĕçевĕçе килнĕ: Алик, Альбина, Андрей, Алексейпа Александра йĕкĕрешсем. Вĕсене ура çине тăратма пулăшакансем ват хунямăшĕпе хĕрĕ пулнă. Ывăлĕпе кинĕ паян кун та вĕсене ырă сăмахпа асăнаççĕ.

Зиновия Петровнăн канашĕсем ыйтупа пыракан пускилĕсемшĕн эмелрен те хаклăрах пулнă. Ватăпа ватă майлă, çамрăкпа çамрăк пулма тавçăрнă çав. Кинĕсемпе кĕрӳшне те ырласа кăна тăрать. Ефимовсен тĕпренчĕкĕсем те тахçанах пурнăçăн анлă çулĕ çине тăнă, тивĕçлĕ профессие суйласа илнĕ. Харпăр хăй вырăнне тупса, çемье çавăрса ватăсене ултă мăнук парнеленĕ. Шел те, аслă ывăлĕн пурнăçĕ ытла та кĕске пулчĕ, ача чухне сарăмсăр таталчĕ. Ыттисем ашшĕ пекех салтака юрăхлă пулчĕç, çĕршыв умĕнчи парăма чыслăн пурнăçларĕç.

55 çула яхăн пĕрле утакан мăшăр картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп усрать, пыл хурчĕсем тытать, кĕнеке-журнал вулать, район хаçатне те çулсерен çырăнса илет, вăхăт таппипе тан утать. Килĕштерсе пурăнаççĕ Ефимовсем, саккăрмĕш теçеткене çывхаракансерсем тату пурнăçра пĕр-пĕрне итлеме, упрама, хута кĕме пĕлмеллине лайăх ăнланаççĕ.

**АНТОНИНА ЕФИМОВА,**
**ВĂРМАНКАС ТĂРĂН**

# ÇАМРĂК ĂРУПА – ТАЧĂ ÇЫХĂНУРА



• ПАТРИОТИЗМ

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине вăй питти яшсем кăна мар, çулланнисем те самаях хутшăннă.**

Сăмах май, манăн атте те, граждан вăрçинче пулнăскер, 1942 çулта тепĕр хут çапăçу хирне кĕрет, пулеметчик пулса çапăçать. Çĕнтерĕве Берлинта кĕтсе илет вăл. Вăрçă суранĕсене пула 60 çула кайсан пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи тата хыççăнхи çулсенче колхозсем хĕрарăмсемпе ачасем çинче кăна тытăнса тăнă. Çиме, тăхăнса çӳреме çукран шкула çӳрекен ачасене 1-2 çĕр улми, хăш чухне вĕсем те пулман, чиксе панипех çырлахнă. Çапах та чăтнă. Çăпата сырса 6-мĕш класс таран Ишек шкулне çӳрени халĕ те куç умĕнче. Эпир, Чăрăшкасси ял тăрăхне кĕрекен ветерансен ушкăнĕ, час-часах Чăрăшкассинчи Леонид Пучков ячĕпе хисепленсе тăракан шкул ачисемпе тĕл пулусем ирттеретпĕр. Çак çутă пурнăçшăн çĕршыв 26 млн çынна çухатнă. Тăшмана çĕнтерес тĕллевпе мирлĕ халăх укçи-тенкине те, çипуçне те, апат-çимĕçне те пĕтĕмпех фронта панă. Вăй питти çамрăксемпе ачасем окопсем чавнă, выçăллă-тутăллă, халран кайиччченех вăй хунă. Пĕтĕм йывăрлăха пăхмасăр халăх çĕнтерĕве çывхартассишĕн ырми-канми тăрăшнине çитĕнекен ăрăвăн манăçа кăларма юрамасть. Вĕсене аттесен, асаттесен паттăрлăхĕ çинчен аса илтерсех тăратпăр эпир, ветерансен канашĕн членĕсем.

**ВАЛЕНТИН СИНЕЛЬНИКОВ,**
**ЧĂРĂШКАССИ**

КОНКУРС

**Тепĕр чухне пахча çимĕç е улма-çырла тĕрлĕ япалана, чĕр чуна е çынна аса илтереççĕ. Сăмахран, пĕкĕ евĕр мăн хăяр, пĕр-пĕрне ыталаса илнĕ е тата пĕр-пĕр сас паллине аса илтерекен кишĕр, чĕрене сăнлакан çĕр улми – çаксем пурте пирĕн пахчара ӳсеççĕ.**

**Эреш-мерешлĕ пахча çимĕç сирĕн куç тĕлне лексен ăна сăн ӳкерсе редакцие ярса пама пултаратăр. Тĕлĕнмелле формăллă çимĕçсен сăн ӳкерчĕкĕсене хаçат страницинче вырнаçтарăпăр.**







**Е. Григорьева сăн ӳкерчĕкĕсем, Ишек**

• ШУПАШКАР РАЙОННЕ – 90 ÇУЛ



**Сăн ӳкерчĕке 1958-59 çулсенче тунă. Шăпах çав вăхăтра Кӳкеçри «Советская» урамра çăкасем лартнă, пĕрремĕш йывăç тротуарсем тунă.**

• ОБРАЗОВАНИЕ

## Для тех, кто не сдал

**С 26 мая по 29 июня 2017 года в 9-х классах проходила государственная итоговая аттестация, в которой по республике участвовали более 11,2 тысячи выпускников. По итогам ГИА 1,82% девятиклассников не справились с заданиями по русскому языку, 12,48% – по математике.**

В связи с этим напоминаем, что учащиеся, не сдавшие экзамены в основной срок, повторно получившие неудовлетворительную оценку при сдаче в резервные дни, а также удаленные с экзаменов, не явившиеся, имели право повторно пройти ГИА в дополнительные сроки: 5 сентября – русский язык; 8 сентября – математика; 11 сентября – литература, история, биология, физика; 13 сентября – обществознание, химия, информатика и ИКТ, география; 15 сентября – иностранные языки, чувашский язык; резервные дни: 18 сентября – русский язык; 19 сентября – география, история, биология, физика; 20 сентября – математика; 21 сентября – информатика и ИКТ, обществознание, химия, литература; 22 сентября – иностранные языки, чувашский язык.

Минобразования Чувашии также информирует, что учащиеся, не прошедшие ГИА в основной срок, будут восстановлены в 9 классах на срок, необходимый для сдачи ГИА в сентябре.

• ДЕЛА МЕСТНЫЕ

## Главный приз – баран

**В деревне Новые Тренькасы отшумел большой праздник – День деревни. Отметить эту дату собрались все желающие, не равнодушные к месту, где они родились и выросли, также приглашенные гости.**

Программу открыла инсценировка «Чăваш туйĕ», приуроченная к Году Отца и Матери в Чувашской Республике. Первые поздравления в адрес жителей населенного пункта прозвучали от главы Шинерпосинского сельского поселения Вячеслава Столярова.

Традиционно в Новых Тренькасах был объявлен конкурс на озеленение и благоустройство дворов и их территорий. Каждый многоквартирный дом организовал свою выставку. Рукодельницы и мастерицы украсили праздник своими осенними поделками, вышивками, изделиями из бисера. Самые активные жители были награждены почетными грамотами и призами, а победителей ждал главный приз – баран.

Почетной грамотой был награжден фольклорно-эстрадный коллектив «Хĕлхем», которому в 2017 году исполняется 30 лет. Жители деревень Новые Тренькасы и Типнеры организовали футбольный матч. Несмотря на ненастную погоду, настроение было отличное, запах шашлыка и шӳрпе разносился на всю округу.

# «Жизнь коротка, талант гения вечен»



Фото Е. Дадюковой

• ДАТА

**9 сентября 2017 года исполнилось 240 лет со дня рождения основоположника российского востоковедения Никиты Бичурина.**

За день до юбилея Никиты Яковлевича Чувашия встретила гостей – ученых из Москвы, Республики Татарстан, Тюменской области других областей, деятелей образования и культуры, государственных и муниципальных служащих, краеведов, преподавателей, аспирантов и студентов. В рамках мероприятий, приуроченных к этой знаменательной дате, в ЧГПУ им. И.Я. Яковлева открылась Международная научно-практическая конференция «Межцивилизационный диалог в научном творчестве и общественной деятельности Иакинфа Бичурина». Директор Музея «Бичурин и современность» п. Кугеси Ирина Удалова выступила с докладом «Духовно-культурное наследие Никиты Бичурина в музейном пространстве Чувашии и чувашской диаспоры Российской Федерации».

### С Пушкиным дружил

В продолжение встречи все участники переместились в поселок Кугеси для возложения цветов к памятнику ученого в Бичуринском саду. И.о. главы администрации Чебоксарского района Владимир Димитриев, приветствуя участников V Бичуринских чтений, отметил значимость вклада земляка в мировую науку и пожелал всем успехов в работе. В чтениях с докладами выступили библиотекари и учителя Чебоксарского района. Научный сотрудник Центра изучения культуры Китая ИДВ РАН, кандидат философских наук Алексей Ионов подарил Музею учебники для изучения китайского языка, а также новые книги института.

Библиотекарь отдела обслуживания Централизованной библиотечной системы Чебоксарского района Наталья Курникова подробно осветила тему «Друзья Никиты Бичурина». По ее словам, жизнь монаха Иакинфа была сложна и противоречива, увлекательна и трагична. Но пережить все тяготы и невзгоды ему помогали друзья, среди которых были Александр Пушкин, Василий Жуковский, Владимир Одоевский, Иван Крылов и другие. Самая яркая страница в творческой биографии Бичурина – знакомство и дружба с поэтом Александром Пушкиным. Он с искренней симпатией относился к великому поэту и в знак почитания дарил ему свои книги. Александр Сергеевич и Иакинф Бичурин много общались, спорили, полагая, что в споре рождается истина.

Учитель чувашского языка и литературы Кугесьского лицея Надежда Петрова выступила с сообщением «Малая родина Никиты Бичурина». Она наглядно рассказала о памятных местах, связанных с нашим земляком.

### «Я видел Китай»

На следующий день в Центральном доме культуры п. Кугеси собрались участники конференции, учащиеся школ, работники культуры на торжественное мероприятие, приуроченное 240-летию со дня рождения Никиты Бичурина.

Заместитель главы администрации Чебоксарского района Сергей Ванюшкин остановился на основных моментах в деле увековечения имени нашего земляка на его малой родине и пожелал плодотворной работы участникам конференции.

Высокую научную оценку творчеству Никиты Бичурина дали сотрудники Центра изучения культуры Китая ИДВ РАН. Владимир Миронов остановился на том, что Никита Яковлевич при своей жизни не накапливал материальное богатство, а обогащался духовно сам, и духовное наследие оставил для сегодняшних ученых. Завершил он свое выступление фразой: «Жизнь коротка, талант гения вечен».

Много интересных и уникальных изданий восточной литературы подарили научные сотрудники Центра изучения культуры Китая ИДВ РАН в библиотеку Музея.

С приветственной речью от китайского народа выступил президент Ассоциации преподавателей китайского языка и китаеведов Сунь Сяовей. Он отметил важность дружбы между двумя странами.

### Вершинная фигура нации

Односельчанин Никиты Бичурина, уроженец д. Типнеры, член попечительского совета Музея Валерий Борисов рассказал историю о поисках архивных материалов, доказывающих место рождения ученого. Благодаря семье Борисовых доказано точное место рождения и установлен памятный камень в д. Типнеры. В завершение выступления Валерий Гурьевич вручил грамоты и подарки победителям конкурсов, которые проводил Музей в целях привлечения внимания к богатому научному наследию выдающегося ученого. В конкурсе презентаций «Никита Бичурин – вершинная фигура нации» по теме «Н.Я. Бичурин: я видел Китай» III место занял ученик 11 класса Кугесьского лицея Александр Григорьев.

Далее участники выехали на малую родину Бичурина в д. Типнеры для возложения цветов, где их хлебом–солью встретил фольклорный коллектив «Шинер».

Затем делегация направилась в с. Бичурино Мариинско-Посадского района, где посетили места захоронения матери и дедушки Никиты Бичурина и ознакомились с экспозициями краеведческого музея.

ЯНА МАЙСКАЯ

# В едином строю

• В ЭТОТ ДЕНЬ



Вчерашние танкисты

**Вениамин Степанов родился 13 июля 1958 года в д. Чалымкасы Чебоксарского района. Получив среднее образование, в 1975 году он поступил в г. Куйбышев в училище по специальности «Фрезеровщик». После окончания учебного заведения вернулся на родину и устроился на завод.**

Осенью 1976 года Вениамина Степанова призвали в ряды Советской Армии. Служил он в Германии. После распределения молодой человек попал в 1-й гвардейский танковый учебный полк возле г. Дрезден, где обучался на механика-водителя среднего танка Т-62. Военную присягу принял в г. Дрезден. После окончания полугодовой учебы он становится механиком-водителем танка 3 класса с присвоением звания «Ефрейтор».

После учебы Вениамина Михайловича направляют служить в гвардейский танковый полк, расположенный в 30 км от Дрездена в г. Кенигсбрюк. В то время командиром был гвардии подполковник Максимишин. Девизом показательного полка было: «В едином строю – к высотам мастерства». Экипажи танков стреляли метко, профессионально водили на ночных и подводных вождениях, преодолевали полосы препятствия. В течение 2-х лет они ходили в караулы, участвовали на танковых учениях на полигонах. За проявленный героизм во время Великой Отечественной войны 16 человек удостоены Героя Советского Союза.

Вениамину Степанову запомнился визит Первого секретаря ЦК Монголии, Председателя хурала МНР товарища Юмжагийна Цэдэнбала в начале мая 1977 года. В полк для встречи с ним прибыл главнокомандующий генерал армии Евгений Ивановский и начальник политического управления ГСВГ генерал-полковник Иван Медников. Высокие гости посетили музей воинской славы, затем состоялся митинг. Гости, пожелав личному составу полка успехов в боевой и политической подготовке, уехали под музыку оркестра.

Вениамин Степанов демобилизовался 19 октября 1978 года. После армии он работал в прессово-сварочном цехе ЧЗПТ фрезеровщиком. Женился и вырастил 2 дочерей, которые подарили ему 3 внуков. Ныне Вениамин Михайлович работает на Ишлейском заводе высоковольтной аппаратуры фрезеровщиком. В свободное время читает газеты и журналы, а также ведет общественно-политическую жизнь. В 2015 году его выбрали руководителем отделения Союза ветеранов ГСВГ по Чебоксарскому району. Сегодня Вениамин Михайлович ведет работу среди ветеранов района и проводит патриотические встречи с молодежью.

НИКОЛАЙ СМИРНОВ, АДЫЛЪЯЛ

• ДЕНЬ ЗА ДНЕМ

## Попурри из пяти песен



**Делегация из Чувашской Республики, состоящая из 8 человек, посетила фестиваль «Дружба народов» в Нижнем Новгороде, посвященный 30-летию Всероссийского общества инвалидов.**

В рамках фестиваля прошли спортивные соревнования среди инвалидов-колясочников, по шахматам, пауэрлифтингу, скандинавской ходьбе, дартсу и настольным играм, а также провели творческий конкурс.

В состав делегации вошли председатель первичной организации общества инвалидов при Синьял-Покровском сельском поселении, заведующая Пархикасинским сельским домом культуры Мария Иванова. Она представила Чувашию в творческом конкурсе вместе с председателем Красночетайской районной организации инвалидов Леонидом Аргандейкиным, который виртуозно аккомпанировал ей на гармошке. Мария Владимировна исполнила попурри пяти самых популярных чувашских песен.

«В следующем году наша чувашская общественная организация инвалидов также будет отмечать 30-летие, поэтому в районах пройдут спортивные и творческие конкурсы. Сейчас мы живем в предвкушении другого события – по линии Минкультуры Пархикасинскому дому культуры должны выделить средства на обновление занавеса, костюмов для творческих коллективов, на покупку ноутбука, музыкальных инструментов», – сообщила Мария Иванова.

# Чтоб жила деревня

• ЛЮДИ ДЕЛА

**Около года работает в Салабайкасинской библиотеке единственный в Чебоксарском районе мужчина-библиотекарь Вадим Волков.**



Старое здание библиотеки

